25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АВГУСТ
13
КĔÇНЕРНИКУН
188 (6123) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Кĕракине хăвăрт ирттерессишĕн

Республика кăçал пуян тырпул пухса илет. Кĕрхи тырăсем те, çурхи тырăсем те кăçал ăнса пулчĕç. Малтанлăха палăртнă тăрăх, хăшпĕр колхозсем кăçал кашни гектартан 100 пăтран сахал мар ыраш пухса илеççĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, хамăрăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлени çакăн пек результатсем панине кура пирĕн кашнин кăмăл çĕкленет, чĕре савăнать. Паллах ĕнтĕ, кĕрхи тырăсем çавăн пек ăнăçлă пулни, чи малтан, пĕлтĕрхи кĕракине пирĕн колхозсем начар мар ирттернинчен килнĕ.

ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, пирĕн республикăра кăçал кĕрхи тырăсене акма августăн 10-мĕшĕнче тытăнмаллаччĕ. Ку срок иртрĕ ĕнтĕ. Республикăри чылай колхозсем кĕрхи тырăсене акма хĕрӳллĕн тытăнчĕç, вĕсем çак ĕçе халĕ организованно туса пыраççĕ. Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз кĕракине августăн 8-мĕшĕнчех тухнă, ку ĕçе вăл 7—8 кун хушшинче вĕçлеме шутлать. Малтанхи кунах колхоз сеялкăпа тата алăпа 11 гектар акса хăварнă. Вăрмар районĕнчи 32 колхоз августăн 10-мĕшĕнче кĕракине тухнă. «Большевик» колхоз икĕ кун хушшинче 56 гектар акса хăварнă, кĕракине августăн 18-мĕш тĕлне вĕçлеме шутлаççĕ. Кунта кĕракине лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнĕ, çĕртме туса хатĕрленĕ, кĕрхи тырăсем акмалли вырăна 8 пин лав тислĕк, 15 тонна фосфорит сăнăхĕ тăкнă. Тӳрех каламалла, ку колхозсем çитес çулхи пысăк тухăçлă тырпулшăн начар мар кĕрешеççĕ.

Кĕраки ĕçĕсене ăнăçлăн ирттерни ялхуçалăхĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кĕракине лайăх хатĕрленсе, хăвăрт тата лайăх пахалăхпа туса ирттерсен, килес çул ыраша тулă тухăçлă пулассине шанма пулать. Çакна пирĕн халĕ пĕтĕмĕшпех ăнланса илес пулать, анчах çакна чылай районсемпе колхозсен руководителĕсем ăнланса илеймен-ха. Кунта тĕслĕхе Йĕпреç районне илсе кăтартма пулать. Çак кунсенче ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Йĕпреç районĕнче кĕраки ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен итлесе сӳтсе яврĕ, район руководителĕсене çирĕппĕн асăрхаттарса хăварчĕ.

Йĕпреç районĕнче кĕракине ирттерме питех те çителĕксĕр хатĕрленнĕ. Кĕрхи тырăсене 7.005 гектар акса хăвармалла пулсан, 4.820 гектар çинче кăна çĕртме туса хатĕрленĕ. Кондициллĕ вăрлăх пачах та çук темелле. Колхозсем хушшинче сортлă вăрлăхсене улăштарса илес ĕçе туса ирттермен. Лашапа ĕçлемелли 109 сеялкăран 98 сеялкине кăна юсаса хатĕрленĕ. Çакăн пек начар хатĕрленнине пула ĕнтĕ августăн 11-мĕш тĕлне районра пĕр колхоз та кĕрхи тырăсене акма тытăнман. ВКП(б) Йĕпреç райкомĕпе райсовет исполкомĕ кĕракине хатĕрленес ĕçе ертсе пыман пирки, вĕсем колхозсене кĕраки мĕнле пысăк ĕç пулса тăнине ăнлантарса паман пирки, кашни ĕçе хаклама тата вăхăтра туса ирттерме вĕренсе çитмен пирки Йĕпреç районĕ кĕракине вăхăтра тытăнаймарĕ.

Кĕраки ĕçĕсем халĕ пур колхозсенче те массăллăн тата хĕрӳллĕн пулса пымалла. Ака ĕçне вăраха ярса пыни, тĕрлĕ «сăлтавсене» пула тăхтаса тăни сиенлĕ. Килес вăхăтсенче çăмăрлă кунсем пуçланса кайма пултараççĕ. Çавăнпа та, халĕ уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе туллин усă курма тăрăшмалла.

Тырпулсене пухса кĕрес ĕç те, кĕраки те ăнăçлăн, организованно пулса пыччăр тесен, колхозсемпе МТС-сен ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухас пулать, çапла майпа пур ĕçсене те вăхăтра туса пыма тăрăшас пулать. Кĕракине пула тырпулсене пухса кĕртес ĕç вăйсăрланни, е тырпулсене пухса кĕртес ĕçе пула кĕраки вăраха кайса пыни пулмалла мар.

Паллах, кĕракине те машинăсемпе туллин усă курсан çеç хăвăрт туса ирттерме пулать. Тракторпа ĕçлемелли тата лашапа ĕçлемелли сеялкăсене халĕ пурне те ĕçе ярас пулать. Машинăсене хирĕçле шухăш-кăмăллă çынсене тивĕçлипе отпор памалла. Анчах кирлĕ çĕрте алăпа акассине те организацилес пулать.

Килес çулти тырпул тухăçлăхĕ мĕнле пуласси вăрлăх пахалăхĕнчен нумай килет. Çавăнпа та кĕраки вăхăтĕнче паха вăрлăха, сортлă тата кондициллĕ вăрлăха çеç акма тăрăшмалла. Вăрлăх çитмен колхозсенче вăрлăх валли кăçалхи тырра çапса хатĕрлессине организацилеме тăрăшас пулать.

Колхозсемпе МТС-сен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсем тăрăх, мала тухнă республикăсен ĕçне хакланă чухне унта кĕраки мĕнле иртнине те шута илеççĕ. Çавăнпа та, пирĕн республика Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухса Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме пултартăр тесен, республикăри кашни районăн, кашни колхозăн кĕраки ĕçĕсене кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерме тăрăшмалла.

Государствăна çĕнĕ тырă пачĕç

ЧКАЛОВСКОЕ. Августăн малтанхи кунĕсенче «Маяк» колхоз (председателĕ коммунист Минаев юлташ) государствăна иртнĕ çулти тырăран 531 центнер ыраш панă. 1942 çулти обязательствăна пĕтĕмпех тултарнă. Колхоз кăçалхи çĕнĕ тырра чи малтан Хĕрлĕ çар фондне парать.

П. НИКОЛАЕВ.

* * *

КУСЛАВККА, августăн 11-мĕш. (Телефонпа). Районри 22 колхоз государствăна çĕнĕ тырă пама тытăннă. «Путь Ленина» колхоз августăн 10-мĕш тĕлне государствăна 8,7 тонна, «16-мĕш партсъезд» колхоз 6,6 тонна, «Канаш» колхоз 3,8 тонна, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз 3,2 тонна тĕштырă леçсе пачĕç. «Коммунист» колхоз государствăна тырă памалли обязательствăна çĕнĕ тырăпа августăн 10-мĕш тĕлне 20 процент, «Ленинский призыв» колхоз 20 процент парса татрĕç. Паянхи куна районĕпе государствăна 55 тонна çĕнĕ тырă леçсе панă.

Н. ЛЬВОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Плана ячĕшĕн çеç тунă

КАНАШ, августăн 11-мĕш. (Телефонпа). Вăтакас Татмăш ялсоветĕнчи «Парижская Коммуна» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем тырпулсене пухса кĕме хатĕрленсе ĕç планĕсем тунă. Плансем лайăх, пурне те тĕплĕн шута илнĕ. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Игнатьев юлташ) план тăрăх 226 гектар çинчи кĕрхи тырăсене 8 ĕçкунĕ хушшинче выреа пуçтарма палăртнă. Çавăн пекех «Парижская Коммуна» колхоз та (председателĕ Хрисанов юлташ) план тăрăх 127 гектар çинчи кĕрхи тырăсене 5 ĕç кунĕ хушшинче вырса пухма палăртнă.

Халĕ тырăсене вырас хĕрӳ вăхăт пырать ĕнтĕ. Кашни колхоз хăйĕн малтанах туса хунă ĕç планне чыслăн, пурнăçа кĕртсе пымалла, уборка ĕçĕсене кунран-кун вăйлатса пырса тырпулсене планпа пăхнă срокĕсенчен маларах пухса кĕртме тăрăшмалла.

Анчах та «Парижская Коммуна» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсенче плана ячĕшĕн çеç туни палăрать. Ку колхозсен ĕçсем план тăрăх пулса пымаççĕ. Тĕслĕхрен, 6 ĕçкунĕ хушшинче Чкалов ячĕпе тăракан колхоз мĕнпурĕ те 78 гектар çеç, «Парижская Коммуна» колхоз 63 гектар çеç ыраш вырнă.

Мĕншĕн-ха юлса пыраççĕ ку колхозсем? Тӳрех калас пулать, колхоз руководителĕсем ответлăха туйса ĕçлемеççĕ. Колхоз председателĕсем машинăсене хирĕçле шухăш-кăмăлран ниепле те уйăрлаймаççĕ, ĕç хăвăртлăхне ӳстерсе пырассишĕн тăрăшмаççĕ.

Чкалов ячĕпе тăракан колхозăн 4 жнейка, 60 кĕреплеллĕ çава. Тырра икĕ жнейкăпа çеç выраççĕ. Ытти жнейкăсем те юсавлă, ĕçлеме пултараççĕ, анчах ыраша кунта ытларах алăпа вырма тăрăшаççĕ, çапла тырăсене пухас ĕçе кая хăварса пыраççĕ. «Парижская Коммуна» колхозра та тырă вырмалла туса хатĕрленĕ косилка ĕçсĕрех ларать, 35 кĕреплеллĕ çава туса хатĕрленĕ пулсан, паянхи куна вĕсемпе пĕр каса та вырман-ха. Ĕçсĕр тăратас пулсан вĕсене мĕншĕн тунă-ши? Мĕншĕн ку колхозсем районри ытти колхозсен опытне халĕ те шута илмеççĕ? Ĕçлеме пултаракан çынсем те кунта çителĕклĕ.

Тырăсене вырса пухас ĕç малашнехи кунсенче те çапла кая юлса пырсан, асăннă колхозсем ыраш вырас ĕçе вăрăма тăсма пултараççĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

ИШЛЕИ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтир тума июль уйăхĕнче районĕпе пĕтĕмпе 616 тир, 262,3 килограмм çăм, 330 метр пир, 31 мăшăр алшиш, 31 алшăлли, 12 кĕрĕк пиншак, 17 мулаххай, 32 мăшăр ăшă алса тата ытти япаласем те пухăннă.

Ăшă тумтирсем тума çăм тата тир пухас ĕç «Парижская Коммуна» колхозра аван пулса пырать. Унта 22 тир, 9 килограмм çăм, 15 метр пир, 3 мăшăр алшиш тата 8 алшăлли пухнă. Свердлов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем—9,5 килограмм çăм, 10 тир, «Маяк» колхозри колхозниксем—10,7 килограмм çăм, 9 тир, 4 мăшăр алшиш панă.

Юлашки вăхăтра, уборкăна тухнă май, ялсенче ăшă тумтирсем пухас енĕпе ĕçлекен комиссисем хăйсен ĕçĕсене вăйсăрлатрĕç. Ку тĕрĕс мар. Халĕ ăшă тумтирсем пухас ĕçе пур майсемпе те вăйлатса пырас пулать.

Е. АРТЕМЬЕВА.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 11-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 11-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетская** районĕнче, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра, çавăн пекех тата **Черкесск, Майкоп, Краснодар** районĕсенче хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Августăн 10-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 40 çити танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 30 лавне, горючи тултарнă 7 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 12 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 4 батальона çити тата утлă çарăн пĕр эскадронне сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетскаяран кăнтăрарах районра пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç вăйлă çапăçусем туса пынă. Нимĕçсем питĕ пысăк çухатусем тӳсеççĕ, анчах резервсем илсе пырса вĕсем Дон патне татса кĕме хăтланаççĕ. Нимĕçсен атака тума пухăнса тăнă танкĕсемпе пехота ларса пыракан автомашинисем çине пирĕн гвардеецсем-минометчиксем вăйлăн персе тăнă. Гитлеровецсен группировкине сапаласа янă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра çапăçусем пынă, çав çапăçусене икĕ енчен те пур йышши войскăсем те хутшăнаççĕ. Совет войскисем кун умĕн йышăнса илнĕ чугун çул станци районĕнче танксен пысăк çапăçăвĕ пуçланса кайнă. Пирĕн танкистсем, авиаципе артиллери пулăшса пынипе, пĕр кун хушшинче çав участокра оборонăна куçнă противника темиçе хутчен те атакăланă. Нимĕçсен 21 танкне, хăй тĕллĕн куçса çӳрекен 7 орудине, танксене хирĕç пемелли 12 орудине, 47 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Артиллерин 3 батарейине тата минометсен 4 батарейине пусарса лартнă, 800 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Краснодар районĕнче противникăн шăтарса кĕнĕ танкĕсемпе мотопехотине хирĕç хаяр çапăçусем пынă. Н-ски соединени оборона тумалли çĕнĕ рубежсем йышăннă та тăшмана тĕл персе кĕтсе илнĕ. Нимĕç танкĕсен пĕр группи пирĕн оборона ăшне чылай шала шăтарса кĕнĕ пулнă. Пирĕн танкистсемпе казаксен чаçĕсем флангсенчен контратакăсем туса, шăтарса кĕнĕ гитлеровецсен группине хупăрласа илнĕ. Çав çапăçура нимĕçсен 19 танкне стройран кăларнă, 33 автомашинине, 40 мотоциклне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирне противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен 700 ытла вилли выртса юлнă. Черкесскпа Майкоп районĕсенче пирĕн войскăсем противникăн наступлени туса пыракан войскисене хирĕç оборонăллă йывăр çапăçусем туса пынă.

* * *

Воронежран кăнтăрарах вырăнта совет войскисем Донăн хĕвеланăç çыранĕнче çак кунсенче йышăнса илнĕ халăх пурăнакан пунктсене тытса тăраççĕ. Тăшманăн пехоти çĕршер танксем пулăшса пынипе пĕр кун хушшинче тунă темиçе атакăна пирĕн боецсем сирсе пăрахнă. Гитлеровецсен 450 çын вилнĕ. Нимĕçсен 9 танкне персе çĕмĕрнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тыткăна лекнисем венгерсен фронта халь çеç килсе çитнĕ 14-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтаксем пулса тăраççĕ. Çав дивизие фронта венгерсен çак кунсенче çапса салатнă 7-мĕш пехотнăй дивизийĕ вырăнне илсе килнĕ пулнă. Тыткăна лекнисем каласа панă тăрăх, венгерсен 7-мĕш дивизийĕнчи çынсем çапăçу хирĕнчен тарма тытăннă та вĕсене нимĕçсем пере-пере вĕлернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче разведчиксем активлăн çапăçнă тата противникăн пысăках мар отрячĕсемпе тытăçусем пулса иртнĕ. Участоксенчен пĕринче пирĕн старши лейтенант Цюпко ертсе пыракан подразделени хӳтĕлесе тăракан рубежа нимĕçсем атакăланă пулнă. Пирĕн боецсем пăшалсемпе пулеметсенчен персе тăшманăн атакине сирсе пăрахнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсем 200 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ, танксене хирĕç пемелли виçĕ орудий, 4 миномет пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 13 дзочĕпе блиндажне çĕмĕрнĕ.

* * *

Белоруссин патриочĕсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсемпе вĕсен тарçисен ĕçĕсене аркатса пыраççĕ. Березински районăн начальникĕ Могилев хулин полевой комендатурин начальникĕ патне янă донесение партизансем тытса илнĕ. Хăраса ӳкнĕ гитлеровец çав донесенире партизансене хирĕç кĕрешме района карательнăй экспедици ярса пама тархасласах ыйтать. Донесенире çапла каланă: «Районра партизансем йышлансах пынă пирки йĕркеллĕн ĕçлесе пырасси чăрăнса ларчĕ. Пирĕн приказсене пурнăçламаççĕ. Халăх налог тӳлеместь, çавăнпа та управăн укçа-тенкĕ çук. Партизансен отрячĕсене пĕтерсе тăкмасăр халăхран налог пуçтарма майсем çук... Эпир вулкан çинче пурăннă пекех пурăнатпăр, пире кашни кунах вилĕм кĕтсе тăрать...»

* * *

Нимĕçсен 3-мĕш мотодивизин 3-мĕш артполкĕнчен тыткăна илнĕ салтак О. Кацевский çапла каласа панă: «Эпир халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ хыççăн унти çынсенчен мĕн туртса илес тетĕн, çавна пурне те туртса илме салтаксемпе офицерсене пĕтĕмĕшпех ирĕк параççĕ. Çавна тума пире нихăçан та чарман, чармаççĕ те. Эпир йышăнса илнĕ хула е ял витĕр яланах войскăсем нумай иртсе каяççĕ: танкистсем, артиллеристсем, мотоциклистсем тата пехота иртет. Пĕр-пĕр часть çитсенех кашни хутĕнчех çĕнĕ çарату пуçланать. Кам та кам хăйĕн пурлăхĕсене хăйĕн ирĕкĕпе парасшăн мар е тата кам та кам нимĕç салтакĕсем çине хисеплемесĕр пăхать, çавăн хăйĕн пурнăçĕнчен уйăрălма тивет. Çавнашкал çаратас ĕçе офицерсем хăйсем хĕтĕртсе пыраççĕ, хаклă япаласем тупас тесе салтаксем хăвăртрах малалла кайма тăрăшаççĕ,—тесе шутлаççĕ офицерсем. Офицерсем хăйсем те хаклă япаласене хăйсен çумне пуçтарса чикеççĕ».

* * *

Польша патриочĕсем Сандомир-Кельце районĕнче пĕр уйăх хушшинче 140 оккупанта вĕлерсе пĕтернĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне çар грузĕсем турттарса каякан 3 эшелона ӳпĕнтерсе янă тата Висла юханшывĕ çинче тырă турттарса пыракан 2 баржăна путарнă. Август уйăхĕн пуçламăшĕнче çĕнĕ тырпула конфискацилеме пынă эсэсовецсен отрячĕ çине тапăнса, партизансем 10 гитлеровеца вĕлернĕ, пĕр пулемет тата 3 автомат тытса илнĕ.

Августăн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетская** районĕнче, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри вырăнта, çавăн пекех тата **Черкесск, Майкоп** тата **Краснодар** районĕсенче кĕрешнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Клетская районĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç вăйлăн çапăçнă. Минометнăй чаçри гвардеецсем тăхăр кун хушшинче 2.000 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 7 танкне, 130 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен 4 складне сирпĕнтерсе янă. Клетскаяран кăнтăртарах вырăнта пирĕн подразделенисем нимĕçсен 4 танкне, минометсен батарейине тата противникăн 250 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра Н-ски мотострелковăй часть, танксемпе артиллери пулăшса пынипе, противникăн мотопехота колоннине маршран тӳрех атакăланă. Нимĕçсене хирĕçле çапăçăва кĕртсе, пирĕн боецсем пуçарулăха хăйсен аллинчен вĕçертмен, гитлеровецсене пысăк çухатусем тӳстернĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕçсем 400 ытла вилĕ пăрахса хăварнă. Нимĕçсен 15 автомашинине тата 7 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краснодар районĕнче пирĕн войскăсем противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă. Пĕр юханшыв урлă каçмалли вырăнсенче уйрăмах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем, кирек мĕнле пулсан та, юханшывăн кăнтăр енчи çыранне каçасшăн. Пирĕн чаçсем, авиаци пулăшса пынипе, шыв урлă каçмалли вырăнсенче нимĕçсен 12 танкне, 36 автомашинине тата 1.000 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Противник çапăçăва çĕнĕ резервсем кĕртет, çавтери пысăк çухатусем тӳснине пăхмасăрах, пĕр атака хыççăн тепĕр атака тăвать.

Черкесскпа Майкоп районĕнче пирĕн чаçсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç хĕрӳллĕн çапăçнă.

* * *

Воронежран кăнтăртарах вырăнта пирĕн чаçсем нимĕçсене халăх пурăнакан икĕ пунктран хăссе кăларнă. Гитлеровецсем темиçе атака тунă, вĕсене пирĕн боецсем сирсе пăрахнă. Вилнисене шутласан кăна 200 салтакпа офицер ытла çухатса, нимĕçсем малтанхи позицисем патнех чакнă. Пирĕн авиаци противникăн танкĕсемпе мотопехоти пухăнса тăнă вырăнсем çине бомбăсем пăрахнă. Нимĕçсен 14 танкне, 40 автомашинине, 12 лавне пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Волхов фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса иртнĕ. Пĕр участокра гитлеровецсем оборона тумалли пĕр рубежа, малтанхи кун кăна пирĕн боецсем йышăнса илнĕскере, каялла таврăнма хăтланнă. Малтан персе хатĕрленнĕ хыççăн неприятель контратакăна пехотăн виçĕ батальонне çити кĕртсе янă. Противникăн контратакине сирсе пăрахнă. Нимĕçсен çав çапăçура 200 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ. Майор Ячменев тата майор Боровой командирсем пулса тăракан чаçсенчи летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 6 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Партизансен В. тата **О.** юлташсем командир пулса ертсе пыракан пĕрлешнĕ отрячĕсем, Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче кĕрешекенскерсем, оккупантсен 3 гарнизонĕ çине пырса тапăннă. Халăхшăн таврăкансем нимĕçсен 150 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, противникăн 6 пулемет, винтовкăсемпе боеприпассем тытса илнĕ. Партизансем нимĕçсен 2 çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсен войскăсемпе боевой техника турттарса пыракан 32 товарнăй тата классăй вагонĕсене çĕмĕрнĕ.

* * *

Нимĕçсен 336-мĕш пехотнăй дивизийĕн 687-мĕш полкĕнчен Хĕрлĕ Çар енне каçнă салтак Альберт П. çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи пĕрмаях Францире тăратчĕ. Пире Россиăна ярасси çинчен пĕлсен, темиçе салтак хăйсене хăйсем вĕлерчĕç. 6-мĕш ротăра обер-ефрейтор Майер хăйне вĕлерчĕ, 9-мĕш ротăра Миллер салтак пĕрĕнсе вилчĕ. Вырăссем пирĕн дивизие вăйлăн хăшатрĕç. Вăл хăйĕн личнăй составĕнчен çуррине çити çухатрĕ те ĕнтĕ. Офицерсем пире пуносерен çитес хĕлĕн кăрушлăхĕсемпе хăратаççĕ. Вĕсем çапла калаççĕ: «Пирĕн мĕнле те пулсан похода кĕркуннеччен вĕçлемелле, унсăрăн пире начар пулать», теççĕ. Офицерсем, нимĕнле çухатусене пăхмасăрах, салтаксене малаллах хăвалаççĕ».

* * *

Юлашки уйăх хушшинче гитлеровецсемпе вĕсен Виши правительствинчи лакейĕсем Париж районĕнче 60 предприятие ытла хупнă. Рабочисене урама кăларса ывăтнă та продовольстви карточкисемсĕр тăратса хăварнă. Вĕсене вербовка тăвакан пунктра регистрацирен витĕр тухма, çакăн хыççăн вара Германие ăсанма сĕннĕ. Ĕçсĕр юлнине пăхмасăрах, француз рабочисем Германие каторгăри ĕçе кайма килĕшмеççĕ.

Колхозниксемпе ялхуçалăх работникĕсем! Тырпулсене пухса кĕртнĕ чухне çакна асра тытăр: фронтри тата тылри çĕнтерӳсем хăйсем тĕллĕнех килмеççĕ—вĕсене тимлĕн ĕçленипе çĕнсе илмелле. Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ валли!

КОМСОМОЛЕЦСЕМ УЙХИРТЕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Тырпула пухса кĕртес тĕлĕшпе колхозсен уйхирĕсенче 400 комсомолец ытла ĕçлеççĕ. Вĕсенчен 5 колхоз председателĕ, 17 бригадир, 56 звеньевой, 135 агитатор, 12 машиновед тата ыт. те.

«Большевик» колхоз председателĕ комсомолец Андреев колхоза лайăх ертсе пырать, комсомол организацийĕ (секретарĕ Михайлова юлташ) колхоз правленийĕпе таччăн çыхăнса ĕçлет. Михайлова юлташ тырă вырнă çĕрте нормăна 120—140 процент тултарса пырать. Унтан ытти çамрăксем пример илеççĕ.

«Красное Именево» колхозри комсомолецсем те начар мар ĕçлеççĕ. Комсомолка-звеньевая Н. Пикаева нормăна ытлашшипех тултарса пырать, кунне 205—280 кĕлте вырать. Çавăн пекех А. Федоров, Н. Малов юлташсем те лайăх ĕçлеççĕ.

«Красный Флот» колхозра машиновед Петр Шашкин кунне 5 гектар вырăнне 7—8 гектар вырать. «Восход» колхозра комсомолка Нина Груздева кунне 0,14 гектар вырас вырăнне 0,16—0,17 гектар вырать.

Уборкăра пионерсемпе шкул ачисем пысăк вăй пулса тăраççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхозра Анна Моисеева тата Анна Давыдова ваттисем пекех паттăррăн ĕçлеççĕ.

Чылай комсомолецсем, уйхир ĕçĕнче агитаторсем пулса, ăнлантару ĕçне куллен туса пыраççĕ. Хаçат-журнал вулаççĕ, колхозра тата бригадăсенче стена хаçачĕсем кăлараççĕ.

Район тырă вырассипе кая юлса пырать. Районри хăшпĕр колхозсем — «Комсомолец», «Трудовик», «Красноармеец», «Красная Чувашия» колхозсем япăх ĕçлеççĕ. Вĕсен руководителĕсем тата комсомолăн кунти организацийĕсен секретарĕсем уборкăна ирттерес тĕлĕшпе ответлăха туймаççĕ пулас.

«Красноармеец» колхозăн тырри пулса çитнĕ. Часах тăкăнма пуçлать. Çапах та кунта машинăпа вырас тесе шухăшласах каймаççĕ. Иртнĕ çул машиновед пулса ĕçленĕ комсомолец Мирон Пешков машинăпа вырма турткаланса тăрать. Çакăн пек ĕçрен хăракан çынсем валли комсомол ретĕнче вырăн пулмалла мар. Анчах та çавăн пек этемсем тупăнаççĕ-ха. «Авангард» колхозра комсомолец П. Кириллов звеньевой пулса ĕçлет, ĕç нормине тултарса пыраймасть. Чылайĕшĕ тата колхоз правленийĕнче, сулхăнра лараççĕ. Хальхи вăхăтра, хирте хĕрсе ĕç пынă чухне, комсомолецăн вырăнĕ колхозниксем хушшинче пулмалла. Комсомолец ĕçре пример кăтартса ыттисене хăйпе пĕрле ертсе пымалла. Комсомолецсем ертсе пыракан колхоз кайра пулмалла мар. Анчах Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Протасов юлташ) паянхи кунччен те кая юлса пырать.

Мичурин ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Денисова юлташ) тырă симĕс тесе вырма кая юлса тухнă.

«Красная Чувашия» колхозри комсомолецсем хăлаçланма юратаççĕ, ĕçне сахал тăваççĕ. Çавна пула колхоз кая юлса пырать. Колхозра ĕç дисциплини япăх, ĕçе час тухмаççĕ, ирех кĕреççĕ. Агитмассăллă ĕç начар.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре пионерсемпе, шкул ачисемпе пĕлсе усă курас пулать. Уйрăмăнах Липовка колхозĕнче шкул ачисен отрячĕсем аван ĕçлеççĕ. Анчах та Шурут, Йӳç-Шăхаль шкулĕсенчи учительсен тата унти комсомолецсен айăпĕпе вĕренекенсем уйхирте ĕçлемеççĕ.

ВЛКСМ пуçламĕш организаци секретарĕсен çакна манма юрамасть. Тырпула пухса кĕртесси вăл—вăхăтра тумалли ĕç. Нумайрах тырпул туянас тесен, вăхăтра тата тăкаксăр пухса кĕртмелле. Пĕр гектар çинче 10 килограмм тырă юлсан, районĕпе 132 тонна тырă усăсăр пĕтет.

Комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен хире вăйлăн хуралламалла, хурала çирĕп комсомолецсене тăратмалла.

1942 çулта тырпулсене пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре чи лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекен районри комсомол организацине пама ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тунă. Çавăн пекех комсомолăн колхозри организацине пама ВКП(б) райкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тунă. Çав ялава илме тивĕçлĕ пулассишĕн тăрăшса ĕçлемелле.

Н. ФОМИН.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Кĕрхи тырăсене акма тытăнчĕç

ШĂХАСАН, августăн 12-мĕш. (Хамăр корр). Ĕнер районри пур колхозсем те кĕрхи тырăсем акма тытăнчĕç. «Парижская Коммуна», Ильич, Тельман ячĕсемпе тăракан, «Заря» колхозсем малтанхи кунах 10-шар гектар ытла ыраш акрĕç. Районри колхозсем ыраша ытларах сеялкăсемпе акса хăварма тăрăшаççĕ.

С. ШАДИН.

КĔРАКИНЕ ХАТĔРЛЕНМЕСĔР ТУХНĂ ПИРКИ

ЙĔПРЕÇ, августăн 12-мĕш. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем кĕракине ирттерме тивĕçлипе хатĕрленмен. Савкка ялсоветĕнчи «Красная Нива», «Красный урожай», «1-е Мая» колхозсем акмалли вăрлăха хатĕрлесе çитермен. Ку колхозсенче иртнĕ çулти тырă акма юрăхлă мар пулин те, кăçалхи тырра хăвăртрах çапса вăрлăх хатĕрлессишĕн тăрăшмаççĕ. Ялсовет исполкомĕ енчен те колхозсене тивĕçлĕ пулăшу пани çук. ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕ 1942 çулти кĕракине туса ирттересси çинчен йышăннă тăрăх, республикăри районсен кĕртыррисене акас ĕçе августăн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр пуçламалла. Çак постановлени пурнăçлассишĕн Савкка ялсоветĕн исполкомĕ кирлĕ пек кĕрешни курăнмасть. Ялсовет исполкомĕ колхозсенче кĕракине ирттересси çинчен ĕнер çеç сӳтсе явнă.

Д. МИХАЙЛОВ.

Торф кӑларас плана тултармалла

Атӑл лешъенчи торф предприятийӗ республикӑри торф предприятийӗсенчен чи пысӑкки шутланать. Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи топливо Управленийӗн торф хатӗрлемелли пӗтӗм планӗнчен 80 процентӗ унӑн ҫине тивет. Ҫакӑн чухлӗ торфа унӑн Шупашкарти предприятисемпе учрежденисем валли хатӗрлемелле.

Торф предприятийӗн работникӗсем умӗнче пысӑк та ответлӑ задача тӑрать—вӗсен хулари предприятисене кирлӗ торфа вӑхӑтра тата ҫителӗклӗ таран кӑларса памалла.

Халӗ торф хатӗрлемелли сезон пырать. Мӗнпур вӑя сезона ӑнӑҫлӑн ирттерес ӗҫе мобилизацилемелле. Анчах Атӑл лешъенчи торф предприятийӗнче ҫакна курма ҫук-ха. Кунти руководительсем—директор Воронцов юлташ, главнӑй инженер Голубев юлташ торф кӑларас ӗҫе тивӗҫлипе организацилемен.

Предприятире торфа ҫынсен вӑйӗпе мар, машинӑсемпе кӑлармалла. Кунта торф кӑлармалли 4 машина пур. Анчах вӗсенчен пӗри те йӗркеллӗ ӗҫлемест, ӗҫре пӗрмай кӑлтӑксем пулаҫҫӗ: е шестерне ҫӗмӗрлет, е трансмиссипе элеватора юсамалла, е тата транспортер ҫинчи хӑмасем ӳкеҫҫӗ. Руководительсем ҫак кӑлтӑксене кураҫҫӗ пулин те, вӗсене сирме тӑрӑшмаҫҫӗ, ҫӳлтен кӑтартса парасса кӗтсе лараҫҫӗ.

Ҫавӑнпа ӗнтӗ машинӑсен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ калама ҫук начар. Кӑҫалхи сезон пуҫланнӑранпа пӗтӗмпе те 3 сменӑра кӑна хӑйсен нормине тултарнӑ. Чылай чух сменӑра 30 пин кирпӗч кӑларас вырӑнне вӑтамран 10—12 пин кирпӗч кӑлараҫҫӗ. Машинӑсем ахаль ларни, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ начарри пӗтӗмпех инженерно-техническӑ работниксен тимсӗрлӗхӗпе ҫавӑрӑнӑҫусӑрлӑхӗнчен килет.

Кунсӑр пуҫне ҫакна та палӑртса хӑвармалла. Предприяти руководителӗсем торф кӑларас ӗҫе ҫийӗнче пуҫӑнмарӗҫ. Вӗсен торф кӑларма тытӑниччен канавсем чавса ҫӗр лаптӑкне типӗтмелле пулнӑ. Анчах ҫак ӗҫе вӗсем темиҫе хут асӑрхаттарнӑ хыҫҫӑн ҫеҫ тата кая юлса тытӑнчӗҫ. Фрезернӑй машинӑпа тата алӑпа торф кӑларассине юлашки вӑхӑтченех хакламасӑр тӑчӗҫ.

Предприятире ӗҫ вӑйӗ ҫителӗклӗ. Рабочисем опытлӑ, ӗҫлеме пӗлеҫҫӗ. Ҫапах та вӗсен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пӗчӗккӗ. Хӑшпӗр рабочисем кӑна нормӑна 130 процент тултараҫҫӗ, чылайӑшсем тултараймаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл пӗтӗмпех рабочисен ӗҫне тивӗҫлипе организацилеменнинчен, вӗсене социализмлӑ ӑмӑртӑва явӑҫтарманнинчен килет. Инженерно-техническӑ работниксем ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетессишӗн кӗрешмеҫҫӗ, хушнӑ ӗҫе мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗслесе тӑмаҫҫӗ.

Политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫ ҫине те ҫителӗклӗ ҫавӑрӑнса пӑхмаҫҫӗ. Агитаторсене уйӑрнӑ та, вӗсем мӗнле ӗҫленипе никам та интересленмест. Рабочисем хушшинче чӑвашсем нумайрах. Ҫавӑнпа рабочисене чӑвашла ӑнлантарса пама ытларах тӑрӑшас пулать.

Предприяти ӗҫӗнче ҫитменлӗхсем татах та пур. Ҫавсене пула предприяти кӑҫалхи сезонра торф хатӗрлес плана августӑн 1-мӗшӗ тӗлне 24 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Вырӑнти топливӑпа— торфпа усӑ курасси—хуҫалӑхри питех те кирлӗ задача. Торф хатӗрлесси уйӑмах вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ахальрен мар «Правда» хӑйӗн умстатьисенчен пӗринче: «планран ирттерсе илнӗ кашни тонна торф, кашни кубометр вутӑ—Хӗрлӗ Ҫара пулӑшни пулать», тесе ҫырчӗ. Ҫакна Атӑл лешъенчи торф предприятийӗн руководителӗсем Воронцовпа Голубев юлташсем ӑнланса илме тивӗҫлӗ. Торф кӑларас плана тултарайман работниксене ҫӗршыв каҫарма пултараймасть.

А. СТУРИКОВ.

Вырӑнти топливо промышленноҫӗн Управлени начальникӗ

ФЗО шкулӗсенче вӗренӳ пуҫланать

Ҫак ҫулти июнӗн вӗҫӗнче фабрикӑпа савод ӗҫне вӗренмелли шкулсенчи ҫамрӑксене вӗрентсе кӑларчӗҫ. Июль уйӑхӗнче вӗсем предприятисенче ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Пирӗн промышленность ҫӗнӗ кадрсем илчӗ.

Чӑваш республикинчи ФЗО шкулӗсенчен вӗренсе тухнӑ ҫамрӑксем ӗҫлеме чылай облаҫсемпе крайсене саланчӗҫ. Пӗрисем Урала, теприсем Мускава кайрӗҫ, чылайӑшсем хамӑр республикӑра юлчӗҫ.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫумӗнчи ӗҫ резервӗсен Управленийӗн начальникӗ Иванов юлташ пӗлтернӗ тӑрӑх, Куславккари иккӗмӗш номерлӗ тата Шупашкарти вунпӗрмӗш номерлӗ ФЗО шкулӗсем уйрӑмах лайӑх вӗрентсе кӑларнӑ. Ҫак шкулсенчен вӗренсе тухнӑ ачасем теорие те ҫирӗп пӗлеҫҫӗ, практикӑра та пултаруллӑ ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫамрӑк рабочисене хатӗрлес тӗлӗшпе Ҫӗмӗрлери пӗрремӗш номерлӗ ФЗО шкулӗ ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртмалла. Юлашки кӑларӑма кунта начартарах ирттернӗ.

Июль уйӑхӗнче ФЗО шкулӗсене ҫӗнӗрен вӗренме илес ӗҫ пычӗ. Республикӑри чылай районсем ачасене вӑхӑтра тата кирлӗ чухлӗ уйӑрса пачӗҫ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмах Элӗк, Шупашкар тата Йӗпреҫ районӗсем лайӑх ӗҫлерӗҫ. Вӗсем ачасене август пуҫланаччченех шкулсене ҫитерчӗҫ. Анчах Шупашкарпа Ҫӗмӗрле хулисем, Чкаловскипе Советски районсем ачасене вӑхӑтра уйӑрса памарӗҫ.

Ҫак кунсенчех ФЗО шкулӗсенче вӗренӳ пуҫланать. Шупашкарти 7-мӗш номерлӗ шкулта занятисем пыраҫҫӗ ӗнтӗ. Фабрикӑсемпе заводсем валли ҫамрӑк кадрсен ҫӗнӗ ушкӑнне хатӗрлеҫҫӗ.

Ҫамрӑк кадрсем

УЛАТӐР. 4-мӗш номерлӗ чугунҫул училищинче июль уйӑхӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсене тунӑ. Ӑмӑртура машинист помощникӗсем пулма вӗренекенсен 7-мӗш группи (мастер Миронов юлташ) мала тухнӑ. Ҫак группа производствӑна вӗреннӗ вӑхӑтра панӑ заданисене пӗрмаях ирттерсе тултарнӑ. Группӑра вӗренекенсенчен чылайӑшсем отличниксем.

Александр Блашкевич тата Алексей Котов отличниксем производствӑллӑ практикӑна Улатӑр станцин деповӗнче ирттернӗ. Ҫамрӑк специалистсем хӑйсен профессине хӑвӑрт вӗренсе ҫитнӗ. Паровозсене кӑтартуллӑ тытнӑшӑн вӗсене депо руководстви тав тунӑ.

Ӑмӑртура иккӗмӗш вырӑна мастер Дохленко юлташ ертсе пыракан 4-мӗш группа йышӑннӑ. Ҫав группӑри Юрий Дохленко тата Иван Рябов вӗренекенсем нормӑна 200 процент тултараҫҫӗ. Вӗсем рационализаторла сӗнӳсем те параҫҫӗ. Вӗсен пӗр сӗнӗвӗпе усӑ курнӑ май, детальсене хӑйраса якатас вӑхӑта чылай кӗскетнӗ.

Слесарьсен группинче (мастерӗ Зюбровский юлташ) пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗ Тамара Метальникова кӑтартать. Вӑл нормӑна 225 процент таран тултарать.

Тӑрӑшса ӗҫлени, мастерсен сӑмахне итлени, станоксене тирпейлӗ тытни—ҫаксемпе палӑрса тӑраҫҫӗ ӗнтӗ ҫамрӑк кадрсем.

Училище директорӗ А. Вальчинский юлташ вӗсене вӗрентес, пӑхса ӳстерес тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлет. Правительство ӑна «За трудовое отличие» медаль парса наградӑланӑ.

Т. К.

Ӗҫри ҫитӗнӳсене ҫирӗплетсе пыратпӑр

ҪӖМӖРЛЕ, августӑн 12-мӗш. **(Телефонпа, хамӑр корр.).** Комбинат коллективӗ июль уйӑхӗнчи программӑна ӑнӑҫлӑн тултарчӗ. Социализмлӑ ӑмӑртура стахановецсен хисепӗ 10 процента яхӑн ӳсрӗ, нормӑна тултарайманнисен хисепӗ 8 процента яхӑн чакрӗ.

Производство программине тултарас енӗпе мала тухнӑ 4-мӗш номерлӗ цехра июнь уйӑхӗнче нормӑна тултарайманнисен хисепӗ 12 процент пулнӑ. Халӗ рабочисем пурте нормӑна тултараҫҫӗ, чылайӑшсем 2—3 норма тултарса ӗҫлеҫҫӗ. Клюев юлташ, июнь уйӑхӗнче нормӑран 1,5 хут тухӑҫлӑрах ӗҫленӗскер, июль уйӑхӗнче виҫӗ хута яхӑн тухӑҫлӑрах ӗҫленӗ. Ҫамрӑк работница Куркова юлташ производствӑна нумай пулмасть кӗнӗ. Вӑл кӗске вӑхӑтрах ҫавтери йывӑр ӗҫе вӗренсе ҫитрӗ, июльри задание 270 процент тултарчӗ.

Ҫамрӑк стахановецсем Азовӑпа Шинкаренко юлташсем пӗр-пӗринпе ӑмӑртаҫҫӗ. Иртнӗ уйӑхра вӗсем кашни кун вӑтамран 220 процент тултарса ӗҫленӗ. Ӗҫри ҫитӗнӳсене вӗсем ҫирӗплетсех пыраҫҫӗ. Августӑн малтанхи пилӗк кунӗнче Азова, Куркова Лопашов юлташсем задание 350 процент, Кузнецова, Фокина, Васильева юлташсем 250 процент тултарчӗҫ.

Х. ЛИСИН.

ВӖРЕНӲ ҪУЛНЕ ХАТӖРЛЕНМЕН ҪӖРТЕ

ВӐРНАР. Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленес тӗлӗшпе районри чылай шкулсенче нимӗн те тумаҫҫӗ. Кӗҫӗн Кипекри вӑтам шкулӑн чӳречисем ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ, класнӑй доскасемпе партӑсене ишӗлнӗ хуралтӑсем вырӑнне тӑратса тухнӑ. Шкулӑн тӑватӑ гектар ҫӗрӗ ҫине ҫӗрулми лартса тата сӗлӗ акса хӑварнӑ пулнӑ. Анчах ҫав улмана пӗтӗмпех ҫум туса илнӗ, унта выльӑхсем ҫӳреҫҫӗ. Шкул директорӗн ӗҫӗсене туса пыракан С. Федоров шкула вӗренӳ ҫулне хатӗрлесе ҫитерес тӗлӗшпе ӗҫлемест.

Шкулта физикӑна тата химие вӗренмелли приборсем чылай пулнӑ. Вӗсене 985 тенкӗлӗх ҫӗмӗрсе тата ҫаратса пӗтернӗ. Умра—вӗренӳ ҫулӗ. Ҫапах та шкул валли 60 кубометр кӑна вутӑ хатӗрленӗ. Кӑҫал саккӑрмӗш класа 40 ача вӗренме илмелле, ҫав класа кӗме панӑ заявленисем иккӗ ҫеҫ-ха.

Шкулти ҫитменлӗхсем ҫинчен районри сутӗҫ отделӗн заведующийӗ пулнӑ А. Осипов лайӑх пӗлсе тӑнӑ. Анчах вӑл Федоровӑн ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерме пулӑшман.

Вӗренӳ ҫулне хатӗрленес ӗҫри ҫитменлӗхсене халех пӗтермелле. Сентябрӗн 1-мӗшӗнче вӗренекенсене йышӑнма, хӗлӗпех йӗркеллӗ ӗҫлеме шкулсем хатӗр пулччӑр.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

ОТЕЧЕСТВЕННӐЙ АСЛӐ ВӐРҪӐ ФРОНЧӖСЕНЧЕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хӗвеланӑҫ фрончӗ). **Укерчӗк ҫинче:** Юланутлӑ разведка.

Л. ДОРЕНСКИЙ фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Нимӗҫсен Ростоври тата Новочеркасскри тискер кайӑкла ӗҫӗсем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, августӑн 10-мӗш. **(ТАСС спецкорӗсем).** Новочеркасска ҫӗмӗрсе кӗрсенех, нимӗҫсем халӑха ҫаратма та вӗлерме тытӑннӑ. Халӑхӑн ытларахӑш пайӗ хуларан тарса тухнӑ. Хулара юлнисем, нимӗҫ оккупанчӗсен куҫӗ тӗлне пулас мар тесе, подвалсенче пытанса пурӑнаҫҫӗ.

Ростовра магазинсем ярием усӑ тӑраҫҫӗ. Хулана йышӑнса илнӗ хыҫҫӑн нимӗҫ салтакӗсем чи малтан магазинсене ҫӗмӗре-ҫӗмӗре кӗнӗ. Унтан вара вӗсем вырӑнти халӑхӑн хваттерӗсене ҫаратма тытӑннӑ. Хула ҫынсӑр тӑрса юлнӑ. Тӑшман ункинчен тарса тухма пултарнӑ совет гражданӗсем каласа панӑ тӑрӑх, гитлеровецсем Дон тӑрӑхӗнчи станцисенче тискер кайӑкла юнлӑ ӗҫсем тӑваҫҫӗ.

Эпир пулнӑ ялта,—тесе каласа парать Алексей Федоров,—нимӗҫсем пӗр каҫ кӑна тӑчӗҫ. Ҫав вӑхӑт хушшинче фашистсем яла асап шӑтӑкӗ туса хучӗҫ. Нимӗҫсем яла пырса кӗнӗ-кӗменех колхоз килкартийӗсене ыткӑнчӗҫ. Хӗҫпӑшалпа хӑратса, вӗсем хӑйсен аллине мӗн лекнӗ пурне те пуҫтарса кайрӗҫ.

Л. ТРИФОН, Н. КОСТЕНКО.

„Мӗн ҫаратма пултаратӑн— пурте санӑн“

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, августӑн 10-мӗш. **(ТАСС спецкорӗ).** Нимӗҫсен 342-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 698-мӗш полкӗнчи 7-мӗш ротӑран тарса каҫнӑ салтак Отто Зинц ҫапла каласа панӑ:

«Мана пурӗ-пӗрех вилме янине пӗлсе тӑрса, эпӗ тыткӑна парӑнма шут тытрӑм. Эпӗ пӗлетӗп, юлашкинчен нимӗҫсене ҫапса аркатаҫҫӗ. Паллах, кун ҫинчен пирӗн калаҫма юрамасть. Салтаксем мӑкалса ҫитрӗҫ. Вӗсем политикӑпа интересленмеҫҫӗ, вӗсем вӑрҫӑ ӗҫӗсем пӗтӗмӗшпе мӗнле пынине ӑнланса илме пултараймаҫҫӗ. Нимӗҫ салтакне ҫапла калаҫҫӗ: «Мӗн ҫаратма пултаратӑн—пурте санӑн»,—тессӗ Вӑл вара ҫаратать».

Германи командованийӗ ҫаратусене чармасть кӑна мар, вӑл, хӑйӗн салтакӗсен шухӑш-кӑмӑлне ҫӗклес тесе, салтаксене уҫҫӑнах хӗтӗртсе пырать.

Ют ҫӗршывсенче

Индири лару-тӑру

ЛОНДОН, августӑн 10-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, хӑйсен служебнӑй функцийӗсемпе оборона мероприятийӗсене сиен кӳрес тӗлӗшпе усӑ куракан вырӑнти влаҫсене улӑштарма Инди правительстви провинцисенчи правительствӑсене полномочи панӑ. Инди гражданӗсем Англие пӑхӑнмалла марри ҫинчен калакан пӗлтерӳсене е правительство ҫак тӗлӗшпе йышӑнакан мероприятисем ҫинчен пӗлтернисене пичетлеме правительство ҫавӑн пекех чарнӑ. Официальнӑй йӗркепе пӗлтернисене е официальнӑй агентствосен пӗлтерӗвӗсене кӑна пичетлеме ирӗк панӑ.

Ҫав агентство пӗлтернӗ тӑрӑхах, Бомбейра трамвайсемпе автобуссем ҫӳрессине, порт районӗсӗр пуҫне, чарнӑ. Хулан ҫурҫӗр енчи хӑшпӗр районӗсенче трамвайсене халӑх ушкӑнӗсем чара-чара лартнӑ. Трамвай ҫулӗсене вӗсем чулсем купаласа пӳле-пӳле хунӑ. Хӑшпӗр предприятисенче ӗҫ чарӑнса ларнӑ. Базарсене пурне те вӑхӑтлӑха хупнӑ.

ЛОНДОН, августӑн 10-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчӗ Делирен пӗлтернӗ тӑрӑх, Пӗтӗм Индири ӗҫ федерацийӗн исполнительнӑй комитечӗ федерацие кӗрекен мӗнпур профсоюзсене ҫар продукцийӗ туса кӑларассине ӳстерме чӗнсе каланӑ. Инди гражданӗсем Англие массӑллӑн пӑхӑнмалла марри ҫинчен конгресс йышӑннӑ решени ҫар тӗлӗшпе тӑвакан ӗҫсене хирӗҫ саботаж тума хӑтланни пулса тӑрать,—тенӗ ҫав чӗнсе каланинче. Рабочисен шухӑш-кӑмӑлне ҫӗклес тӗлӗшпе профсоюзсен мӗн май килнине пурне те тумалла.

НЬЮ-ИОРК, августӑн 11-мӗш. (ТАСС). Пичетре пӗлтернӗ тӑрӑх, Делире темиҫе демонстраци пулса иртнӗ, вӗсенчен чи пысӑкраххи августӑн 10-мӗшӗнче ирхине пулнӑ. Бомбейра демонстраци вӑхӑтӗнче 12 ҫынна вӗлернӗ тата 60 ҫынна ытла амантнӑ. Ҫав событи хыҫҫӑн предприятисенче стачка пуҫланнӑ. Чи кирлӗ таварсемпе сутӑ тӑвакан магазинсене хупма чарса правительство распоряжени панӑ пулин те, чылай базарсене, хулари мусульмансем пурӑнакан районсенчи базарсемсӗр пуҫне, хупса лартнӑ.

Бомбейра 18 заводри рабочисем ӗҫлеме чарӑннӑ. Ахмедабадра пир-авӑр фабрикинчи рабочисем пӗтӗмӗшлӗ стачка пуҫласа яни ҫинчен пӗлтернӗ.

ЛОНДОН, августӑн 11-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Карачире мӗнпур базарсене хупнӑ. Шкулсемпе колледжсенчи вӗренекенсемпе студентсем занятисене ҫӳреме пӑрахнӑ.

Пуна хулинче пур учрежденисене те войскӑсем йышӑнса илнӗ. Мадрасра конгресӑн деятелӗсене нумайӗшӗсене арестленӗ. Мадрасс провинцийӗн влаҫӗсем конгрессистсен демонстрацийӗсемпе пухӑвӗсене ирттерме чарнӑ. Бомбейӑн ҫурҫӗр пайӗнче полици посчӗсем ҫине хӗҫпӑшалсенчен пенӗ, телеграф провочӗсене татса пӗтернӗ, урамри фонарьсемпе почта ещӗкӗсене ҫӗмӗрнӗ. Бомбейпа Аллахабадра тӗттӗм пулсан халӑха урама тухма чарнӑ.

Индин нумай провинцийӗсенче конгресӑн организацийӗсене закон тулашӗнче тесе пӗлтернӗ. Полицин ӗҫӗсене регулярнӑй войскӑсем пулӑшса пыраҫҫӗ.

Джинна мусульмансене чӗнсе калани

ЛОНДОН, августӑн 11-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Индири мусульмансен лигин председателӗ Джинна мусульмансене Инди гражданӗсем Англие пӑхӑнмалла мар текен кампание кирек-мӗнле хутшӑнассинчен те чарӑнса тӑма чӗнсе каланӑ.

Джинна конгрессистсене мусульмансем ҫине тапӑнма хӑтланассине хирӗҫ е вӗсене хирӗҫ пикетсем тӑратассине хирӗҫ асӑрхаттарса каланӑ.

Инди националисчӗсен позицийӗ

ЛОНДОН, августӑн 11-мӗш. (ТАСС). Хинду Махасабахӑн (Инди националисчӗсен организацийӗн) председателӗ Саваркар: Инди гражданӗсем Англие пӑхӑнмалла мар текен кампание нимӗнле пулӑшу та ан парӑр, тесе мӗнпур индуссене чӗнсе каланӑ. Ҫав вӑхӑтрах Саваркар Хинду Махасабахӑн исполнительнӑй комитечӗ решени йышӑниччен конгрессистсене хирӗҫ нимӗнле тӑшманла ӗҫ те тумалла мар тесе ыйтнӑ. Ҫакӑнпа пӗрлех Саваркар правительствӑна ҫапла асӑрхаттарнӑ: халь пулса тӑнӑ лару-тӑрӑва юсамалли чи ӑнӑҫлӑ меслет вӑл Англи парламенчӗ уҫӑмлӑ деклараци пани пулнӑ пулӗччӗ,—тенӗ. Ҫав декларацире Индия Британи империйӗн составӗнче пӗтӗмӗшпех ирӗклӗ те пӗр тан правӑллӑ партнер пулса тӑрасси ҫинчен шантарса каламалла,—тенӗ Саваркар.

Фашизма хирӗҫле выступленисем Румынире

ЖЕНЕВА, августӑн 10-мӗш. (ТАСС). Юлашки вӑхӑтра Румыни ҫамрӑкӗсен фашизма хирӗҫле кӗрешӗвӗ вӑйланнӑ. Болгарин «Днес» хаҫачӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Антонеску распоряжени кӑларнӑ. Ҫав распоряжени тӑрӑх румын ҫамрӑкӗсене, концентрациллӗ лагерьсене ӑсатассипе хӑратса, «киносемпе паркренче тата урамсенче харпӑрхӑйне типтерлӗн тыткалама» хушнӑ. Ҫав приказ мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине полицие ҫирӗппӗн сӑнаса пыма хушнӑ, мӗншӗн тесен юлашки вӑхӑтра обществӑллӑ вырӑнсенче ҫамрӑксен правительствӑна тата Германие хирӗҫле выступленийӗсем темиҫе хутчен пулса иртнӗ.

США-ра Германи шпионӗсене вӗлерни

НЬЮ-ИОРК, августӑн 9-мӗш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви панӑ хыпар тӑрӑх, Германин подводнӑй лодкисем ҫинчен США-на анса юлнӑ 8 шпионран 6-шне вӗлерни ҫинчен Шурӑ Ҫурт пӗлтернӗ.

Пӗр шпиона виличченех каторгӑри ӗҫре ӗҫлеттермелле, тепӗрне—30 ҫуллӑха тӗрмене хупмалла приговор йышӑннӑ. Шурӑ Ҫуртӑн пӗлтерӗвӗнче ҫакна кӑтартса панӑ: ҫав икӗ шпиона вӗлермелле туса йышӑннӑ приговора Рузвельт вӗсене тӗрмене хупмалли приговорпа улӑштарнӑ, мӗншӗн тесен вӗсем ытти шпионсене арестлеме Америка правительствине пулӑшнӑ.

„Европӑра иккӗмӗш фронт уҫни питех те кирлӗ“

Ломбардо Толедано тунӑ заявлени

НЬЮ-ИОРК, августӑн 11-мӗш. (ТАСС). Латинла Америкӑри рабочисен конфедерацийӗн председателӗ Ломбардо Толедано Мексикӑра профсоюз членӗсен митингӗнче тухса каланӑ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл Европӑра халех иккӗмӗш фронт уҫма кирлине палӑртнӑ.

Толедано ҫакна кӑтартса панӑ: иккӗмӗш фронт уҫассине татах та кая хӑварса пыни пысӑк хӑрушлӑх кӳрет, мӗншӗн тесен ҫакӑ вӑл вӑрҫа вӑраха ярать, ҫавна пула халӑхсен, вӑл шутра Мексика халӑхӗн те, ытларах жертвӑсем тӳсме лекет.

Англири профсоюз организацийӗсем иккӗмӗш фронт уҫма ыйтаҫҫӗ

ЛОНДОН, августӑн 11-мӗш. (ТАСС). Манчестер хулинче нумай ҫынлӑ митинг пулса иртнӗ. Ӑна железнодорожниксен национальнӑй союзӗн Ланкашир округӗнчи комитечӗ организациленӗ. Митинг иккӗмӗш фронта халох уҫма ыйтса пӗр шухӑш-кӑмӑлпа резолюци йышӑннӑ.

Англири горняксен федерацийӗн председателӗ Лоутер хӑйӗн Лондонри выступленийӗнче ҫапла каланӑ: «Иккӗмӗш фронт пирӗн промышленность умне пысӑк ответлӑх лартнине эпир ӑнланатпӑр, анчах эпир хамӑрӑн обязательствӑсене пӗтӗмӗшпех пурнӑҫа кӗртетпӗр».

Европӑра халех иккӗмӗш фронт уҫма ыйтса профсоюзсен ытти чылай организацийӗсем те резолюцисем йышӑннӑ.

—○—

ЗАГРЕБ РАЙОНӖНЧИ ҪИВӖЧ ЛАРУ-ТӐРУ

ЛОНДОН, августӑн 9-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Загреб районӗнчи нумай ялсенче хресченсемпе оккупантсем хушшинче ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Павеличӑн пукане «правительствин» нумай членӗсене арестленӗ те халӑх сучӗсен приговорӗсем тӑрӑх пере-пере пӑрахнӑ. Пӗтӗм районра малтанхи пекех вӑрҫӑллӑ лару-тӑру. Партизанла вӑрҫӑ мӗнпур Хорватипе Словение, ҫурҫӗрти Крайнӑран пуҫласа кӑнтӑрти Далмаци ҫыранне ҫитиччен, ҫавӑрса илнӗ. Ҫӗршыври нумай районсенче халӑха 21 сехетрен пуҫласа 5 сехетчен урама тухма чарнӑ. Ҫак правилӑна пӑсакансене ҫийӗнчех персе пӑрахаҫҫӗ. Загребра ҫӗнӗ ухтарусем тунӑ тата ҫынсене массӑллӑн арестлесе пӗтернӗ.

НЬЮ-ИОРК, августӑн 9-мӗш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, партизансен отрячӗсем юлашки кунсенче Сараево патне ҫывӑхах пырса ҫитнӗ, оккупациллӗ войскӑсенчен хӗҫпӑшалсем, боеприпассемпе продовольстви тытса илнӗ. Белград-Ниш-Скопле хушшинчи чугунҫулӑн пӗр пайне ҫӗмӗрнӗ. Артиллерирен персе венгерсен Дунай ҫинчи икӗ пароходне вут тивертнӗ.

Оккупациленӗ мӗнпур районсенче партизансем хресченсене пӗтӗм тыр-пула, вӑл фашистсен аллине ан лектӗр тесе, ҫунтарса яма чӗнекен плакатсем ҫыпӑҫтарса тухнӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ПЕДАГОГИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ
Наркомпроса РСФСР в г. Мариинском Посаде
продолжает прием заявлений на I курсы всех факультетов Педагогического и Учительского Институтов.

Педагогический институт имеет 4 факультета: истории, языка и литературы (с отделениями русского языка и литературы и чувашского и русского языка и литературы); физики и математики (с отделениями физики и математики) и естествознания.

Институт подготовляет преподавателей для работы в техникумах и 8—10 классах средних школ.

Срок обучения 4 года.

Учащиеся, окончившие средние школы в 1941 и 1942 г. г., а также лица, демобилизованные из Красной Армии, принимаются без испытаний.

Учительский институт имеет 5 отделений: истории; русского языка и литературы; чувашского и русского языка и литературы; физики и математики; естествознания и географии.

Институт подготовляет преподавателей для работы в 5—7 классах средних и неполных средних школ.

Срок обучения — 2 года.

В Учительский институт принимаются без испытаний окончившие в 1941 и 1942 г. г. 10 и 9 классы средних школ (за исключением естественно-географического отделения, где состоится конкурс лицам, окончившим 10 и 9 классы не на «отлично» и «хорошо»).

Прием заявлений в Педагогический и Учительский Институты продолжается до 1 сентября.

Приемные испытания (для лиц, поступающих с испытаниями) состоятся с 15 по 25 августа.

С 17 августа открываются подготовительные курсы.

Правила приема и программы испытаний можно получить из ин-та, выслав марок на один рубль, или во всех районных отделах Народного образования.

Все студенты обеспечиваются местом в общежитии, питанием в столовой и продовольственными и промтоварными карточками, а имеющие аттестат отличника или 2/3 отличных оценок за последний класс (9 или 10), а также участники отечественной войны, вернувшиеся в вуз из Красной Армии и Военно-Морского флота после ранений, контузий, увечья или болезни, зачисляются на государственную стипендию. Институт имеет свое подсобное хозяйство.

От платы за обучение освобождаются нуждающиеся из числа студентов, а также лица, вновь поступившие из Красной Армии и Военно-Морского флота после ранения, контузии, увечья или болезни и инвалиды рядового и младшего начсостава, призванного в ряды Красной Армии и Военно-Морского флота, получающие пособие согласно Указу Президиума Верховного Совета от 26 июня 1941 года.

Нуждающиеся из числа студентов, могут совмещать учебу с работой на предприятиях, учреждениях г. Мариинский Посад. Дирекция оказывает таким студентам помощь в подыскании работы.

Заявления с документами направлять по адресу: г. Мариинский Посад, Педагогический Институт, дирекции.

ДИРЕКЦИЯ.

ПРИ ЧУВАШСКОМ ГОСУДАРСТВЕННОМ ПЕДАГОГИЧЕСКОМ ИНСТИТУТЕ
в гор. Мариинском Посаде
Открываются подготовительные курсы
для поступающих в Педагогический и Учительский институты.

Задача курсов: подготовить слушателей к поступлению в Педагогический или Учительский Институт. Успешно закончившие курсы и сдавшие экзамены по предметам 9-го или 10-го классов средней школы принимаются в Институт без испытания.

На курсы принимаются все граждане, которые окончили средние школы до 1941 года, не закончили 10-е классы и желают поступить в Педагогический Институт или не закончили 9-е классы и желают поступить в Учительский Институт.

Начало занятий—17 августа. Обучение на курсах бесплатное; курсанты обеспечиваются общежитием и столовой.

Заявление с документами направлять до 17 августа по адресу: г. Мариинский Посад, ЧАССР, Чувашский Государственный Педагогический Институт, директору.

ДИРЕКЦИЯ.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ:

Инженеры и техники-технологи по холодной обработке металла, инженер-калькулятор, экономисты, мастер по каменным и штукатурным работам, инженер-электрик по нормализации, чертежники-копировщики, машинистки, бухгалтеры, снабженческие и складские работники.

Рабочие следующих специальностей:

Токари, револьверщики, долбежники, фрезеровщики, шлифовщики, заточники, слесари-инструментальщики, слесари-водопроводчики, слесари по ремонту, слесари-сборщики, лаковары, прессовщики, литейщики, сварщики, штамповщики, электромонтеры, слаботочники, радиомонтеры, шлифовщики, автоматчики, кузнецы-молотобойцы, наборщики, печатники, переплетчики, маляры, печники, каменщики, штукатуры, плотники, столяры, грузчики, подносчики, комплектовщики, ящичники, упаковщики, стекольщики, шорники, жестянщики, шофера, пожарные работники, уборщицы, грузчики, курьеры.

ПРИНИМАЮТСЯ вахтеры и пожарные работники (мужчины и женщины).

На переквалификацию принимаются по специальностям: слесари, револьверщики, токари, наборщики, печатники, строители, а также счетные работники.

Обращаться: ул. Карла Маркса, 80, от 11 до 3 час. дня.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 908

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.